# Вырӑс шкулӗсенчи 9-мӗш класра «Тӑван ҫӗр-шыв – Чӑваш Республики» темӑпа ирттермелли материалсем

ӖҪЕ ПУРНӐҪЛАКАНӖ: Ефимов
Анатолий Дмитриевич,
Шупашкарти пӗтӗмшле пӗлӳ
паракан 18- мӗш вӑтам шкулти
чӑваш чӗлхипе литература учителӗ.
ЕРТСЕ ПЫРАКАНӖ: Иванова Н.Г.,
ЧВРИ чӑваш чӗлхипе литература кафедрин
доценчӗ

I. ПРОЕКТ ТЫТӐМӖ.

**Проект теми:** Вырӑс шкулӗсенчи 9-мӗш класра «Тӑван ҫӗр-шыв – Чӑваш Республики» темӑпа ирттермелли материалсем.

**Проект тӗллевӗсем:** Вырӑс шкулӗсенчи 9-мӗш класра вӗренекен ачасен калаҫу чӗлхине анлӑлатса аталантарнӑ май тӑван ҫӗр-шыв иксӗлми пуянлӑхӗпе илемлӗхне, тӑван халӑх культурипе тараватлӑхне туйса ӑна хаклама, юратма вӗрентесси.

**Проект задачисем:**

- Чӑваш чӗлхи урокӗсенче тӑван ен историйӗпе унӑн культурине, халӑх ӑс-хакӑлӗпе ҫут-ҫанталӑк илемлӗхне уҫса парасси.
- Тӑван халӑх йӑли-йӗркине курса ӑна туйма вӗрентесси.
- Чӑваш чӗлхине хисеплесе юратма, унпа типтерлӗн те ҫепӗҫ калаҫма хӑнӑхтарасси.
- Тӑван ен ҫинчен пухнӑ материалсене пӗтӗҫтерсе пӗтӗмлетме, куҫ умне пурнӑҫ кӑларса тӑратакан ыйтусене курса вӗсене тӗрӗс хаклама тата туллин хуравлама хӑнӑхтарасси.
- Пухнӑ материалсенчен ачасемпе тӗпчев ӗҫӗсем хатӗрлесси.
- Шкулта иртекен наукӑпа практика конференцийӗнче тата Республикӑри «Самант» журнал ирттерекен «Йӑмраллӑ ял» проекта анлӑн хутшӑнасси.

**Проект тухӑҫлӑхӗ:** Тӑван ен, тавралӑх, ял-йыш ыйтӑвӗсемпе илемлӗхӗ ҫинчен кӑсӑкланнӑ май ачасем чӑваш чӗлхи урокӗсенчи ыйтусене урок тулашне кӑларса хӑйсен калаҫу ӑсталӑхне туптаҫҫӗ. Тӑван чӗлхерен ютшӑнма, вӑтанма пӑрахаҫҫӗ. Чӗлхе пуянлӑхне туйса унпа анлӑн усӑ курма вӗренеҫҫӗ.

**Проект актуаллӑхӗ:** Чӑваш чӗлхи урокӗсенче «Тӑван ен» е «Чӑваш Республики» евӗрлӗ темӗсем тӑтӑшах тӗл пулаҫҫӗ. Раҫҫейри нумай халӑхсем хушшинчи туслӑха уҫса панӑ май, эпир ку уроксенче ачасене тӑван ене юратма, тӑван халӑхӑмӑра хисеплеме вӗрентетпӗр. Унӑн пуянлӑхӗ, авалтан килекен иксӗлми ӑс-хакӑлӗ кашни ачара пурри куҫ кӗретех. Ҫав пуянлӑха тупма, ӑна уҫса чун-чӗрене пуянлатма вӗрентесси вара – учитель ӗҫӗ. Ҫавӑн пек ҫеҫ, хулара ҫитӗнекен ачасем хӑйсене тӑван халӑхӑмӑртан ют тытма пӑрахӗҫ, ҫавӑн пек ҫеҫ, вӗсем тӑван чӗлхене хисеплӗҫ. Ун техӗмне туйса юратса калаҫӗҫ, тен, ҫырса калавсем те калӑплӗҫ. «Ик чӗлхе – икӗ ӑс», – тенӗ Чӑваш халӑх патриархӗ И.Я. Яковлев. Кунпа килӗшмех тивет. Тӑван чӗлхене юратакан ача пурнӑҫра нихӑҫан та катӑк пулмӗ. Вӑл малалла аталанӗ, тӑван халӑхӑмӑра савса ӑна чапа кӑларӗ.

**Тӗп шухӑшӗ:** Ачасен тавра-курӑмне чӑваш чӗлхи витӗмӗ урлӑ аталантарса тӑван ҫӗр-шыв ҫинчен тӗплӗн те туллин, хӑйсен умне лартнӑ тӗллевсемпе шухӑшсене тӳррӗн те уҫҫӑмӑн палӑртса калаҫма хӑнӑхтарасси.

**Проекта пурнӑҫлама усӑ курнӑ мелсемпе меслетсем:**

- Ачасемпе тӑван ҫӗр-шыв, тӑван кӗтес темӑпа калаҫу ирттересси.
- Тӑван ен илемне курма, ӑна сӑнлама вӗрентесси.
- Кӗнеке тата хаҫат-журналсенчи текстсене тишкересси.
- Таврана, пурнӑҫа сӑнлесси.
- Ял-йышпа, тантӑшсемпе калаҫмалли ыйту тӑрӑмне йӗркелесе хатӗрлесси.
- Ыйтусене пӗтӗмлетсе калӑплесси. Текстлесси.

**Ĕç сăнĕсем:**

- Ушкăнпа.
- Пĕчченшер.

**Проекта хутшăнакансем:**

- Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 18-мĕш вăтам шкулти 9 «а» класра вĕренекен ачасем.

**Проекта пурнăçа кĕртмелли вырăн:**

- Шупашкарти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 18- мĕш вăтам шкул.
- Чăваш Республикинчи «Самант» журналта иртекен «Йăмраллă ял» проект.

**Проекта пурнăçа кĕртмелли тапхăр:**

- Хатĕрленӳ тапхăрĕ.
  - Тĕп тапхăр.
  - Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ.

| Проекта пурнăçа кĕртмелли тапхăрсем | Ĕçсен содержанийĕ |
|---|---|
| I. Хатĕрленӳ тапхăр (апрель пуçламăшĕ) | - Шкул тата çумри библиотекăсенчи чăвашла тухса тăракан хаçат-журналсемпе, тĕрлĕ йышши словарьсемпе паллашасси.<br>- «Тантăш» хаçатпа «Самант» журналти материалсене тишкерсе хакласси.<br>- Пĕр-пĕр темăпа çыхăнуллă ыйтусем хатĕрлесе текст йĕркелесси.<br>- Тăван ялсене кайса унта палăртнă темă тавра ял-йышпа е тантăшсемпе калаçасси.<br>- Проект темине уçса пани, ун тавра калаçни.<br>**Результатсем:**<br>- Ачасем хăйсен тавра-курăмне анлăлатаççĕ.<br>- Пухса килнĕ материалсене уроксенче усă курса калаçусем йĕркелеççĕ. Темисене палăртаççĕ.<br>- Кластерсем туса йĕркелеççĕ. |
| II. Тĕп тапхăр. (апрель варри) | - Палăртнă темăсемпе калаçу урокĕсем ирттересси.<br>- Шкулти наукăпа практика конференцийĕнче тухса калаçасси.<br>- Кирлĕ сĕнӳсем парасси.<br>**Результатсем:**<br>-Пуçтарнă материалсемпе уроксенче анлă усă куратăп.<br>- «Яла кайсан – урăх тĕнчене лекен!» темăпа шкулта иртекен наукăпа практика конференцийĕнче тухса калаçнă. 1,2,3 вырăнсем. |
| III. Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ. (апрель вĕçĕ) | - Палăртнă темăсене анлăлатса тарăнлатасси, вĕсен тĕп тĕллевĕпе пĕтĕмлетĕвĕсене тăвасси, анлă текст калăпласси.<br>**Результатсем:**<br>Палăртнă темăсене илемлетсе «Самант» журнал 2012 çулта ирттерекен «Йăмраллă ял» проектне ярса парасси. |

**Гипотеза:**

Ачасем тăван ен, тăван тавралăх çинчен кăсăкланнă май хăйсен тавра-курăмне ӳстерсе чĕлхе туйăмне çирĕплетме тивĕç. Ăна анлăлатса пынă май тăван чăваш чĕлхин пуянлăхне туйса тарăнăн усă курма вĕренĕç. Тус-тăвана, хурăнташа хисеплесе сума-сăвĕç.

Ют çын шухăшĕсене ăнланса калаçĕç. Пурнăç тĕрлĕ енлĕхне курма, туйма вĕренеĕç. Аслă пурнăç таппине çирĕп утăмсемпе утăмласа кĕрĕç.

**Теори бази:**

- Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле вăтам пĕлĕвĕн патшалăх вĕренӳ стандарчĕн национально-региональнăй компоненчĕ.
- Андреев И.А. Вырăс шкулĕсенчи чăваш чĕлхине вĕрентмелли программа. – Ч. 2009ç.

**Программăпа – методика материалĕ**.

- Андреев И.А., Гурьева Р.И. Чăваш чĕлхиĕĕ – Ч., Издательстсво çурчĕ, 2009ç.
- Республикăра чăвашла тухса тăракан хаçатсемпе журналсем.

**Проекта пурнăçа кĕртесси:**

Аслă классенчи ачасене тĕпчевпе проект шайĕнче ирттерекен ĕçсене явăăтарни вĕсен тавра курăмне анлăлатса пуянлатать çеç. Ачасем тăван чĕлхене хисепленисĕр пуçне унăн пуянлăхне курса туйма, ăна хаклама вĕренеççĕ. Таврари пулăмсене, обществăри тĕрлĕ кăткăс ыйтусене курса вĕсем çине хуравсем шыраççĕ, тупсăмне тупса хăйсен евĕр туллин те илемлĕн хуравлаççĕ. Ку ачасен ăс-тăнĕнче тăван таврана юратма, хисеплеме тата чăваш чĕлхипе анлăн усă курса типтерлĕн те вырăнлă калаçма хистет. Проекта хутшăннă ачасем тĕнче çине пачах урăх куçсемпе пăхаççĕ. Вĕсем хăйсен пултарулăхне тĕрлĕ енлĕ аталантарса кросвордсем, ребуссем йĕркелерĕç. Тăван ен çинчен альбом рефератсем турĕç. Шкулта иртекен пур мероприятисенче хутшăнса хăйсене кăтартрĕç.

**Кĕтнĕ çимĕçĕ:**

Шкулта ирттернĕ наукăпа практика конференцийĕнче:

- Надя Григорьева «Ялта романтиксем юлман» - 1-мĕш;
- Вероника Сакмарова «Çур ял – пирĕн тăван-хурăнташ» - 2-мĕш;
- Алина Мышкина «Яла кайсан – урăх тĕнчене лекен» - 3-мĕш вырăнсем йышăнчĕç.

**Пичетленнĕ материалсем:**

- Надя Григорьева «Ялта романтиксем юлман» // Самант. – 2012.- №4.- с. 16.
- Вероника Сакмарова «Çур ял – пирĕн тăван-хурăнташ» // Самант. – 2012.- №6.- с. 10.
- Алина Мышкина «Яла кайсан – урăх тĕнчене лекен» //Самант. – 2012.- №8.- с. 16.

**Проекта усă курасси:**

Ачасен «Ялта романтиксем юлман», «Çур ял – пирĕн тăван-хурăнташ» тата «Яла кайсан – урăх тĕнчене лекен» ĕçĕсене чăваш чĕлхи урокĕсенче анлă усă куратăп.

«Вырăс шкулĕсенчи 9-мĕш класра «Тăван çĕр-шыв – Чăваш Республики» темăпа ирттермелли материалсем» проекта чăваш чĕлхипе литература тата урок тулашĕнчи ĕçсенче анлă усă куратăп.

**Проект смети:**

- CD дисксем.
- Фотографисем.
- Хутсем.

## Ачасен журналистика тĕпчев ĕçĕн тĕслĕхĕ:



*9 «а» класра вĕренекен Григорьева Надя*

## Республикăри ялсенче романтиксем юлман

**Ĕç тытăмĕ:**

I. Ĕç йĕрки.

1. Ĕç теми.
2. Тема актуаллăхĕ.

3. Ĕç тĕллевĕсем.
4. Ĕç задачисем.
5. Тĕпчев обьекчĕ.
6. Тĕпчев предмечĕ.
7. Ĕçе пурнăăлама усă курнă мелсемпе меслетсем.
8. Гипотеза.
9. Кĕтнĕ çимĕçĕ.

II. Ялта романтиксем юлман.
III. Пĕтĕмлетӳ.
IV. Усă курнă литература.

## I. Ĕç йĕрки

1. **Ĕç теми.**

   Республикăри ялсенче романтиксем юлман.
2. **Тема актуаллăхĕ.**

   Ялсенче пурăнакан çамрăксем кун-çул таппинчен юлмасăр хăйсен пурнăçне туптамалли вырăнне, нумай чухне паян пурнăç ăине кӳренсе аллисене усса лараççĕ. Хутран-ситрен вĕсем чăвашла манса эрех-сăра, пирус туртма та пăхаççĕ. Хăйсен шăпипе хăйсем хуçине пĕлмеççĕ. Эпĕ хамăн ĕçре шăп та лăп çав ыйтусене çутатса парасшăн. Ку – çамрăксемшĕн чи кирлĕ ыйтусенчен пĕри вăл!
3. **Ĕçĕн тĕллевĕсем.**

   Ял çамрăкĕсемпе калаçса вĕсен ыйтăвĕсене тупса палăртасси, çав ыйтусен тупсăмне тупса уçса парасси, актуаллăхне палăртса çамрăксем патне калаçу тата хаçат-журналсем урлă илсе çитересси. Проблемăна çутатасси.
4. **Ĕç задачисем.**

- Республикăра тухса тăракан хаçат-журналсенче хамăн темăна çывăх материалсене тупса паллашасси;
- Ял çамрăкĕсемпе калаçса ыйтусене палăртасси;
- Шухăшсене пухса калăпласси;
- Текст йĕркелесси.
- Шкулта иртекен наукăпа практика конференцинче тухса калаçасси;
- «Самант» журналти «Йăмраллă ял» проекта хутшăнасси.

5. **Тĕпчев обьекчĕ.**

   Ялта пурăнакан çамрăксем. Вĕсен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ.
6. **Тĕпчев предмечĕ.**

   Ялта пурăнкан çамрăксен пурнăç умне тухса тăракан ыйтăвĕсем, вĕсен тупсăмĕ.
7. **Ĕçе пурнăçлама усă курнă мелсемпе меслетсем.**

- Тĕпчев.
- Хаклани.
- Калаçни.
- Пĕтĕмлетни.

8. **Гипотеза.**

   Ман шутпа, паянхи çамрăксен ыйтăвĕсене тӳремĕн, куçа-куçăн, çутатса пани – пурнăçа курма пулăшать кăна. Эпĕ çырнă материала итлекенсем, тен, вулакансем те пулсан, вĕсем кăшт та пулин улшăнасса шанатăп. Çĕрĕшĕнчен пĕри çеç – хăйĕн шăпине хăй кӳлсе çавăхласа тытсан – эпĕ хамăн ума лартнă тĕллевсене пурнăçларăм тесе шутлама пултарăп. Çапла пулатех! Шанатăп!
9. **Кĕтнĕ çимĕçĕ.**

   Çамрçксем эпĕ лартнă ыйту тăрăх калаçу пуçарасса, çав калаçура кашни хăйĕн валли пĕтĕмлетӳсем тăвасса кĕтетĕп.

## II. Республикăри ялсенче романтиксем юлман

Ман атте Хӗрлӗ Чутай, анне Красноармейски районӗнчен. Ҫуллахи каникулта эпӗ анне ялне, Хусакассине ҫӳретӗп. Уйӑх е ытларах унта канатӑп. Кукаҫи-кукамиҫӗре кӗчӗҫ, ялта анне аппӑшӗ пурӑнать. Хама таҫти тӗнче шӑтӑкне килсе лекнӗн туймастӑп. Туссем, ман пек хуларан килнӗ ҫамрӑксем пур, вӗсемпе калаҫса илетӗн. Ҫитменнине, ялӗ Шупашкартан аякра мар, эрнере пӗрре хулана килсе каятӑп.

Хусакасси пысӑк мар, ҫамрӑксем сахалтарах. Хула ачисемпе танлаштарсан, вӗсем кӑшт айвантарах темелле-и, примитивлӑрах пек туйӑнаҫҫӗ. Ӑс-тӑн пирки каламастӑп ӗнтӗ, воспитани ҫапларах вӗсен, вырӑсла каласан - "закомплексованнӑйрах". Эрех ӗҫкелекенсем те пур вӗсем хушшинче.

Ялта хӗр ачасем нумайрах. Вӗсене пит мухтас килмест ман. Пирӗнпе, хула хӗр ачисемпе, пит калаҫмаҫҫӗ. Маншӑн лайӑхах мар вӗсем. Тата, темшӗн, арҫын ачасене улӑштарма юратаҫҫӗ, тӗрлӗ каччӑпа ҫӳреҫҫӗ. Пирус туртакан хӗрсем те пур. Сӑра та ӗҫеҫҫӗ. Вӗсен шучӗпе ҫакӑ чаплӑ, капла ҫынран юлмаҫҫӗ. Ӳссе ҫитсе хӗр пулнӑ тесе шутлаҫҫӗ. Телевизор ҫинчи пек пурнасшӑн. Хӑш чух вӗсене ӗҫлемелле, вӗренмелле, пурнӑҫа хӑвӑн тумалла тесе калатӑп та, ҫамрӑк-ха эсӗ, сан вӑхӑтра хамӑр та ҫапла шутланӑ тесе ҫеҫ хуравлаҫҫӗ.

Мана атте-анне ялан пурнӑҫра пурте хӑвӑнтан килет, саншӑн никам та нимӗн те туса памасть тесе вӗрентет. Тӗрӗс калаҫҫӗ вӗсем. Эпӗ пур ҫӗре те ҫитме тӑрӑшатӑп, обществӑллӑ пурнӑҫра чӗрӗ пулни хама та килӗшет.

Ялти арҫын ачасем - уйрӑм тема. Принцсем пирки каламастӑп та. Рыцарьсен вӑхӑчӗ те иртсе кайрӗ, халӗ романтиксем те пӗтсе пыраҫҫӗ. Ялӗпе те калаҫма юрӑхлӑ темиҫе арҫын ача кӑна пур. Тӗрех палӑртас, ял ачисем рационаллӑ шутлаҫҫӗ, кичемрех вӗсем, ялӗпе те пурӗ икӗ романтик ҫеҫ. Пӗри - Миша, вӑл хуларан ҫӳрет, аслӑ, 20-ре. Тепри - Дима, хальлӗхе ялта, 15-ре. Вӗсемпе калаҫма интереслӗ, ыттисемпе ун пек мар, вӗсем «ялан» пуласлӑх пирки шутлаҫҫӗ, укҫа-тенкӗ питӗ илӗртет вӗсене.

Ҫамрҫк пулсан та клуба тухкаласа кӗретӗп, пӗччен мар ӗнтӗ, аппапа. Вӑл Оля ятлӑ, 19-та. Ял клубӗнче пире кичемрен Красноармейскине ҫӳретпӗр. Райцентрта паллакан арҫын ачасем пур - Никитӑпа Стас. Вӗсен ашшӗ-амӑшӗ-сем ялтан. Никитӑпа Стас час-часах аслашшӗ-асламӑшӗ патне килсе каяҫҫӗ. Тӗрлӗ уявра вӗсем яланах ялта.

Хуларан килсен ял тӑрӑхӗ, ҫут ҫанталӑкӗ куҫа савӑнтарать. Ҫумрах Ҫавал юхса иртет. Эпир аттепе пулла та ҫӳретпӗр. Пулӑсене пит палласах каймастӑп, уланкӑна кӑна уйӑратӑп. Ҫавал хӗрне нумай ҫын канма ҫӳрет. Хуларан килнисем юхан шыв ҫине тухса кӗреймесен чуна темӗскер ҫитмест теҫҫӗ.

Ялта хал ҫитернӗ таран аннен аппӑшне пулӑшма тӑрӑшатӑп. Хуҫалӑхра ӗҫлетӗп, пӗчӗк ачасемпе ларатӑп. Ӗҫченлӗхпе ял ачисене ҫитейместӗн ӗнтӗ, вӗсем мӗн пӗчӗкрен тем ӗҫне те пӗлеҫҫӗ. Ӗҫ тесен закомплексовӑнӑҫӗ ҫук вӗсен. Манпа танлаштарсан, ун пек чух профессорсем вӗсем.

Ман шутпа, хула-ял пӗтӗмӗшле танлаштарӑвӗнче, ялти шкулта вӗренекенсене пӗчӗк чух аталанма тулли услови ҫукрах. Пурнҫӑ ытла пӗр пек, ахальтен каламаҫҫӗ стенасем те вӗрентеҫҫӗ тесе. Чи начарри - йыш ҫукки, йӗри-тавра ача-пӑча кӗрлесе тӑнӑ пулсан урӑхлрах ӗҫетчӗҫ, кулатчӗҫ вӗсем. Эпир те хуларан килнисем ун пек чух урамра пӗр чарӑнми чӑвашла калаҫса ҫӳреттӗмӗрччӗ пуль. Атте-анне каланӑ тӑрӑх, вӗсем ҫамрӑк чух урам тулли ачаччӗ тет. Ялта ҫавӑн чухлӗ ача ӗсме пултарни пуҫа вырнаҫмасть.

Аслӑ классенче тин ял ачисем хулари тантӑшӗсемпе танлашаҫҫӗ темелле. Каларӑм ӗнтӗ, хӑш-пӗрисем ытлашшипех «пысӑкланса» каяҫҫӗ. Тепӗр тесен, хулари ачасем те пин тӗрлӗ.

**III. Пӗтӗмлетӳ.**

Мана атте-анне ялан пурнӑҫра пурте хӑвӑнтан килет, саншӑн никам та нимӗн те туса памасть тесе вӗрентет. Тӗрес калаҫҫӗ вӗсем? Ҫавӑнпа та эпӗ пур ҫӗре те ҫитме тӑрӑшатӑп, обществӑллӑ пурнӑҫра чӗрӗ пулни хама та килӗшет.

Манпа ҫамрӑксем килӗшессе, вӗсем те чӑвашра чӑвашла калаҫса общество пурнӑҫне активлӑ хутшанасса шанатӑп.

**IV. Усӑ курнӑ литература.**

- Ефимов А.Д. 45 тем по чувашскому языку. Учебное пособие. Чебоксары. 2006. – 102 с.
- Краткая чувашская энциклопедия. Чебоксары, Чуваш. кн. изд.-во, 2003. – 526 с., ил.
- Современная Чувашия. Под общей редакцией кандидата филосовских наук Ф.И. Шоркова.2007. – 500 с.
- Самант. – 2012.- №1,2,3.

**Хушса панисем:**

№1

**Ыйтусен йӗрки:**

1. Санӑн аҫупа аннӳ Чӑваш Республикин хӑш районӗнче ҫуралса ӳснӗ?
2. Унта халӗ кам та пулин пурӑнать-и?
3. Эсӗ аҫупа аннӳн тӑван ялне кайса ҫӳретӗн-и?
4. Ялти ҫамрӑксемпе туслашма ҫӑмӑл-и? Мӗншӗн?
5. Яла кайсан эсӗ мӗнле чӗлхепе пуплешме тӑрӑшатӑн?
6. Саншӑн чӑваш чӗлхи ют мар-и? Сана унпа ӑҫта лайӑххрах калаҫма – ялта е хулара? Мӗншӗн?
7. Паянхи хула ҫамрӑксем яла канма ҫеҫ каяҫҫӗ тени тӗрӗс-и?
8. Эсӗ ялта аслисене пулӑшатӑн-и?
9. Ял пурнӑҫӗ ҫӑмӑлтарах е хулара?
10. Ялти пурнӑҫ ҫинчен мӗн шутлатӑн? Унти каччӑсемпе хӗрсем сан шутпа еплерех? Пурнӑҫран юлса пымаҫҫӗ-и?

№2

**Фото альбом.** Проекта пурнӑҫа кӗртнӗ самантсем:

- **Хатӗрленӳ тапхӑрӗ (апрель пуҫламӑшӗ).**





Шкул тата ҫумри библиотекӑсенчи чӑвашла тухса тӑракан хаҫат-журналсемпе, тӗрлӗ йышши словарьсемпе паллашрӑмӑр. «Тантӑш» хаҫатпа «Самант» журналти материалсене тишкерсе хакларӑмӑр.





Ялсене тухса унти çамрăксемпе калаçрăмăр, вĕсен нуши-масипе паллашрăмăр. Хамăра кăсăклантаракан ыйтусен тупсăмне шырарăмăр.

❖ **Тĕп тапхăр (апрель варри).**





Калаçу урокĕсем ирттертĕмĕр. Шкулти наукăпа практика конференцийĕнче тухса калаçрăмăр.

❖ **Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕпе результатсем**:





Палăртнă темăсене анлăлатса тарăнлатрăмăр, вĕсен тĕп тĕллевĕпе пĕтĕмлетĕвĕсене турăмăр. Вĕсене илемлетсе «Самант» журнал ирттерекен «Йăмраллă ял» проектне ярса патăмăр.

Çитĕнӳ! «Самант» журнал ирттерекен «Йăмраллă ял» проектра пичетленнĕ материалсене тишкернĕ самант.

**№3**

**Пичетленнĕ материалсем:**


ЙĂМРАЛЛĂ ЯЛ

Çур ял — пирĕн тăван-хурăнташ



**№4**
**Хисеп грамоти.**


ХИСЕП ГРАМОТИ

Тантӑш

Чӑваш Ен Информаци политикин министерствин
„Тантӑш" хаҫат редакцийӗ" хӑй тытӑмлӑ учрежденийӗ

[illegible]
[illegible]
[illegible]

Анатолий Дмитриевич ЕФИМОВА
(Шупашкар хули, 18-мӗш шкул)

Хисеп грамотипе чыслать.

2013 ҫулхи авӑнӑн 23-мӗшӗ

редактор В.Д. Николаев